ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ÇЕМЕРЛЕ РАЙОНЕН КĂМАША РАЗЪЕЗЧЕ ХАЛĂХ ПУРĂНАКАН ВЫРĂННЕ ПЕТЕРЕССИ ÇИНЧЕН ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН УЙРĂМ САККУНЕСЕН АКЧЕСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин Çĕмĕрле районĕн Кăмаша разъезчĕ халăх пурăнакан вырăнне пĕтерес.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин администраци-территори тытăмĕ çинчен" 1997 çулхи раштав уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 28 №-лĕ саккунĕ (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1998, 23 №; 2002, 46 №; 2005, 65 №; 2006, 72 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; "Республика" хаçат, 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ) çумне хушса çырнин 18.5-мĕш позицине улшăну кĕртес, унтан "Кумашка разъезчĕ" сăмахсене кăларса пăрахас.

3 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн статусне парасси çинчен" 2004 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ сак-

кунĕ (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 61 №; 2007, 73, 75 №-сем; 2009, 82 №; 2011, 89, 92 (I том) №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 10 №; 2016, 4, 6 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, çу уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ, 0000000000000328, 0000000000000329 №-сем, раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000439 №; "Республика" хаçат, 2024, çу уйăхĕн 30-мĕшĕ) çумне 52^{24}-мĕш хушса çырнин 6-мĕш пунктне улшăну кĕртес, унти улттăмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас.

4 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Çĕмĕрле хули тата Чăваш Республикин Çĕмĕрле муниципаллă округĕ муниципаллă пĕрлĕхсене улăштарасси çинчен тата Чăваш Республикин "Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн статусне парасси çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" 2024 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 30 №-лĕ саккунĕн ("Республика" хаçат, 2024, çу уйăхĕн 30-мĕшĕ) 2 статйин 2-мĕш пайĕн 6-мĕш пунктне улшăну кĕртес, унтан "Кумашка разъезчĕ," сăмахсене кăларса пăрахас.

5 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕ
74 №